Сирĕн ыйтусем çине хуравлатпăр

# Вĕрентӳ ĕçĕ çĕнĕ шая çĕклентĕр

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

9-мĕш тата 11-мĕш классенчен вĕренсе тухакансен патшалăх аттестацийĕн положенийĕпе килĕшӳллĕн 11-мĕш класран вĕренсе тухакансем 5 экзаменран кая мар тата 6 экзаменран ытла мар тытаççĕ. 2007–2008 вĕренӳ çулĕн итогĕсемпе пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисенчен вĕренсе тухакансем пурте вăтам шкул курсĕшĕн пĕрлехи патшалăх экзаменĕ шучĕпе обязательнăй йĕркепе математикăпа тата вырăс чĕлхипе экзамен тытаççĕ. Улшăнусем пулса иртрĕç. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче пĕрлехи патшалăх экзаменĕ тытмалли виççĕмĕш предмета выпускниксем хăйсем суйласа илеççĕ. Унта физика, хими, биологи, географи, Раççей историйĕ, обществознани, ют чĕлхе (акăлчан, нимĕç тата француз), информатика кĕреççĕ. Çапла вара 11-мĕш класран вĕренсе тухакансен кăçал пĕрлехи патшалăх экзаменне 3 предметпа тытмалла пулать.

**– Пилĕк çул каялла районтан панă направленипе вĕренме кайнă студентсенчен кăçал каялла миçе специалист таврăннă?**

– Çулленех шкулсенчен вĕренсе тухакансем тĕллевлĕ направленисем илеççĕ. Ку енĕпе район администрацийĕ И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕпе тата И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх педагогика университечĕпе специалистсем хатĕрлесе пама килĕшӳ тунă. 2002 çулта тĕллевлĕ направлени илнисенчен 2007 çулта 4 çамрăк педагог вĕрентӳ системинче ĕçлеме тытăннă. Кусем вĕсем С.Н. Антонов (Муркаш лицейĕн информатикăпа физика учителĕ), З.И. Антонова (Чуманкасси шкулĕн акăлчан чĕлхи учителĕ), Н.Ю. Степанова (Чуманкасси шкулĕн чăваш чĕлхипе литература учителĕ), А.В. Федорова (Кашмаш шкулĕн вырăс чĕлхипе литература учителĕ).

**– Ачасен хисепĕ шкулсенче чакать. Çавна май педагогсене чакарма планлатăр-и?**

– Юлашки вăхăтри демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăру шкулсенче вĕренекенсен йышĕ çинче те палăрать. Халĕ вĕренекенсен шучĕ чакать. Çавна май комплектлă классен шучĕ те чакмасть мар, педагогсен кадрĕсем те сахалланаççĕ. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче республикипе пĕр учитель пуçне 12 вĕренекен тивнĕ пулсан (яллă вырăнсенче – 10 вĕренекен), пирĕн районта – 9 вĕренекен.

**– Атапай шкулне хупсан унта мĕн уçаççĕ?**

– Атапайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкула хупасси пирки паян кун йĕркинче ыйту тăмасть.

**– Район центрĕнче ача сачĕсенче вырăнсем çитмен пирки калаçаççĕ. Лару-тăру чăннипе еплерех?**

– Район центрĕнче шкул çулне çитмен ачасем пĕтĕмпе 350 шутланаççĕ. Вĕсем валли район центрĕнче икĕ ача сачĕ пур: «Путене» тата «Солнышко». «Путене» садикре 8 ушкăна 145 ача çӳрет, «Солнышко» садикри 6 ушкăна – 110 ача. Çапла вара 255 ача валли вырăн пур. 95 ача валли садиксенче вырăн çитмест.

**– Шкулсенче ачасене вĕри апат çитерессипе лару-тăру пур çĕрте те йĕркеллĕ-и?**

– Районти пур вĕрентӳ учрежденийĕсенче те ачасене вĕри апат çитерессине йĕркеленĕ. Çакна валли ашшĕ-амăшĕсем укçа тӳлеççĕ, кунпа пĕрлех шкулсем çумĕнчи вĕрентӳпе сăнав участокĕсем çинче туса илнĕ пахча çимĕçпе тата улма-çырлапа усă кураççĕ. Районти шкул столовăйĕсенче апатлану хакĕ вăтамран 10-12 тенкĕпе танлашать. Вĕри апат çитерессине мĕнле йĕркеленине санэпиднадзор службы тата районти вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ вĕçĕмех тĕрĕслесе тăраççĕ.

**– Шкулсенче ачасенчен укçа тапăнса илнĕ тĕслĕхсем пур теççĕ. Мăн Сĕнтĕр шкулне аслă классене ачасем пыма шикленни пирки калаççĕ. Сăлтавĕ – укçа тапăнса ыйтни. Ку пулăм пирки мĕн шутлатăр?**

– Чăннипех кун пек тĕслĕхсем пур пулсан, тивĕçлĕ мерăсем йышăнăпăр. Хальлĕхе вара пирĕн пата та, асăннă шкул администрацине те ачасенчен те, вĕсен ашшĕ-амăшĕсенчен те кун пек тĕслĕхсем пирки пĕлтернисем пулман. Кун пек тĕслĕхсем пирки пĕлетĕр пулсан, шкул администрацине хыпарлама тăхтаса ан тăрăр.

**– Педагогсен ĕç укçине ӳстерессипе малашне мĕн тума палăртатăр?**

– Ку енĕпе муниципаллă шайра туса ирттерекен мероприятисем шутне çаксене кĕртмелле. Чăваш Республикин Экономикăпа социаллă аталанăвĕн стратегийĕпе килĕшӳллĕн 2009 çулта социаллă сфера ĕçченĕсен ĕç укçине, 2006 çулхипе танлаштарсан, 2 хут ӳстерме палăртнă. Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоровăн «Чăваш Республикинче вĕрентӳ системине патшалăх пулăшăвĕ парассипе пурнăçламалли хушма мерăсем çинчен» Указĕпе килĕшӳллĕн 2007 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вĕрентĕвĕн пур сферинче ĕçлекенсен те ĕç укçи, 2006 çулхипе танлаштарсан, 20 процент ӳснĕ, ĕçшĕн тӳлемелли çĕнĕ системăпа усă курма тытăннă май вара – 25 процент.

Муниципаллă шайра район администрацийĕн пуçлăхĕ 2007 çулхи сентябрĕн 24-мĕшĕнче 433 № йышăну турĕ. Çапла вара педагогсен ĕç укçине 20 процент ӳстерме май килчĕ.

Чăваш Республикин 2007 çулхи июлĕн 19-мĕшĕнчи 45 № Саккунĕпе тата район администрацийĕн пуçлăхĕн 2007 çулхи сентябрĕн 28-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн вĕрентӳ ĕçченĕсене ĕçшĕн тӳлемелли çĕнĕ системăна тапхăрăн-тапхăрăн ĕçе кĕртме тытăннă. Тĕрĕслев шучĕпе ĕçшĕн тӳлемелли çĕнĕ системăпа Муркаш лицейĕнче туллин усă кураççĕ. Ытти вĕрентӳ учрежденийĕсенче вара ĕçшĕн тӳлессин хавхалантармалли фондне йĕркелеççĕ. Вăл учрежденин ĕçшĕн тӳлемелли фончĕн 10 процентĕнчен кая мар пулать.

Ĕçшĕн тӳлемелли çĕнĕ системăн тĕп задачисем:

– ĕç укçи шайне ĕç пахалăхĕпе, ĕç кăтартăвĕпе çыхăнтарасси;

– ĕçшĕн тӳлессин хавхалантару функцийĕсене ӳстересси;

– учителе тӳлессипе çыхăннă пур ĕç-хĕл тĕсĕсене те шута илесси т. ыт. те.

Районти шкулсенче ĕçлекенсен ĕç укçи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕçшĕн тӳлемелли фондăн икĕ пайĕнчен тăрать: база пайĕнчен тата хавхалантару пайĕнчен. Хавхалантару фончĕпе сентябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса районти пур шкулсенче те усă курма тытăннă. 2007 çулта унăн калăпăшĕ шкулăн ĕçшĕн тӳлемелли фончĕн 10 процентĕпе танлашать. 2009 çул тĕлне вара 30 процента çитмелле. 2007 çулхи сентябрь–октябрь уйăхĕсенче хавхалантару фондĕнчен 1,8 миллион тенкĕ тӳленĕ. Хавхалантару шучĕпе учительсене тӳлени уйăхне вăтамран 868 тенкĕпе танлашнă. Ĕçре уйрăмах пысăк кăтартусем тăвакан уйрăм учительсен вăл уйăхне 1300-1500 тенкĕ е ытларах та пулнă.

Каларăм ĕнтĕ, ку системăпа туллин халĕ Муркаш лицейĕнче усă кураççĕ. Кунта педагогика ĕçченĕсемпе ертӳçĕсен должность оклачĕсене çирĕплетнĕ чухне ĕçлеме пултаракан çынсене пурăнма кирлĕ укçа-тенкĕн 2007 çулхи чи пĕчĕк виçине (3368 тенкĕ пулнă) тата шалăва ӳстермелли коэффициентсене шута илнĕ. Окладăн база виçине çулталăкра пĕр хут сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне палăртаççĕ. Ăна педагогика ĕçченĕсенне палăртнă чухне пĕлӳ шайне, стажа, квалификаци категорине шута илеççĕ. Ертсе пыракансенне палăртнă чухне – пĕлӳ шайĕпе квалификаци категорине тата ĕç укçи тӳлессипе вĕрентӳ учрежденийĕсен ушкăнĕсене.

Муркаш лицейĕнче нумай учительсен ĕç укçи, 2006 çулхипе танлаштарсан, 2 хут ӳснĕ. Халĕ çамрăк специалист-учитель уйăхне вăтамран 6062,4 тенкĕ илет. Ку вăл класс ертӳçи пулнăшăн тата хавхалантару шучĕпе хушса тӳленине шутламасăр.

Чăваш Республикин Президенчĕн 2008 çулхи январĕн 14-мĕшĕнчи 3 № Указне, ЧР Министрсен Кабинечĕн 2008 çулхи январĕн 30-мĕшĕнчи 19 № йышăнăвне тĕпе хурса район администрацийĕн пуçлăхĕ кăçалхи февралĕн 1-мĕшĕнче «Муркаш районĕнчи муниципаллă учрежденисенче ĕçлекенсен ĕç укçине ӳстересси çинчен» 59 А № йышăну турĕ. Çапла вара ĕçлекенсене ĕç укçи тӳлессине 14 процент ӳстерме май килчĕ. Вĕрентĕве модернизацилемелли комплекслă проекта пурнăçа кĕртекен учрежденисенче должноçри база оклачĕн виçи педагогсемпе ертӳçĕсен 2008 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен 14 процент хăпарчĕ, 3840 тенкĕпе танлашрĕ, 2008 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен татах 9,5 процент ӳсĕ те 4205 тенкĕпе танлашĕ.

Район прокуратуринче

## Ĕç укçи пирки

Район прокуратури «Сывлăх» наци проектне пурнăçа кĕртсе пырассипе законодательствăна мĕнле пурнăçланине тĕрĕсленĕ. Ытларах ку фельдшерпа акушер пункчĕсенче ĕçлекенсене, тухтăрсене, фельдшерсене тата васкавлă медицина пулăшăвĕн сестрисене укçа тӳлессине пырса тивет.

Тĕрĕслев вăхăтĕнче çавна тупса палăртнă. РФ Правительствин 2006 çулхи декабрĕн 28-мĕшĕнчи постановленине пăснă тĕслĕхсем пур: отпускнойсем, больничнăйсем шутласа панă чух, çавăн пекех квалификацие ӳстернĕ тапхăрти вăтам ĕç укçине шутласа панă чухне хушса тӳлемен. Ку хавхалантару тӳлевĕсем вара ĕç укçин тĕп пайĕ пулса тăраççĕ. Çапла вара Раççей Федерацийĕн Ĕç кодексĕн 114-мĕш статйине, 139-мĕш статйин 4-мĕш пайне, 167, 183 тата 187-мĕш статйисене пăснă.

Районти тĕп больницăран тата 2-мĕш номерлĕ район больницинчен тăратнă сведенисемпе килĕшӳллĕн асăннă тӳлевсем енĕпе чăннипех те медицина ĕçченĕсем умĕнче парăмсем пур.

Район прокуратури пĕтĕмĕшле 600000 тенкĕне яхăн парăма шыраса илме суд приказĕсен 53 заявленине хатĕрленĕ.

## Газ котельнăйĕсенче йĕрке кирлĕ

Район прокуратури газ хуçалăхĕшĕн ответлă пулса тăракан службăсен представителĕсемпе пĕрле Калайкасси, Юнкă тата Оринин шкулĕсенчи котельнăйсенче çут çанталăк газĕпе ĕçлекен оборудованисемпе епле усă курнине тĕрĕслерĕ. Тӳрех каласа хăвармалла, çитменлĕхсем çук мар. Шыв ăшăтмалли хурансен хăрушсăрлăх автоматики юсавсăр, котельнăйсенче сывлăшри углерод окиçĕпе метан виçине палăртакан приборсем вырнаçтарман, манометрсем çинче чи пысăк пусăм виçине палăртнисем çук.

Кунпа пĕрлех Юнкă шкулĕнче газ валеçекен узелтан газ тухса тăнă тĕслĕхе тупса палăртрăмăр. «Моргаушрайгаз» филиалĕн аварипе çăлав службин вăйĕпе кăна çитменлĕхе çийĕнчех пĕтерме май килчĕ.

Газпа усă курнă чухне уйрăмах тимлĕ те асăрханулла пулмалла. Унсăрăн шар курасси инçе мар. Тĕрĕслев итогĕсемпе газ оборудованийĕпе усă курассишĕн ответлă çынна административлă майпа айăпласа 2000 тенкĕ штрафлама тиврĕ. Прокурор представленийĕпе тупса палăртнă çитменлĕхсене пĕтернĕ.

## Шкул автобусĕсем пирки

«Вĕрентӳ» наци проектне пурнăçа кĕртсе пынă май чăваш Республикин вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕн 2007 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнчи 770 № йышăнăвĕпе районти вĕрентӳ учрежденийĕсене КАВЗ маркăллă 3 шкул автобусĕ тата ГАЗ-322213 маркăллă микроавтобус уйăрса панă. Пĕтĕмĕшле илсен Оринин, Çатракасси тата Ярапайкасси шкулĕсенче шкул автобусĕсемпе ГОСТ требованийĕсене пăхăнса усă кураççĕ, автобуссем юсавлă.

Çапах та çитменлĕхсем çук мар иккен. Тĕрĕслев вăхăтĕнче Оринин шкулĕн автобусĕн çутатмалли приборĕнче лампа çунмастчĕ. Огнетушительсем иккĕшĕ те водитель ларкăчĕ айĕнче вырнаçнă. Салонăн хыçалти пайĕнче пушар тухас пулсан сӳнтерме май çук.

Виçĕ шкулĕнче те автобуссен хыçалти багаж пайĕнче фиксацилемелли ятарлă устройство вырнаçтарман. Автобуса тăрук чарас пулсан е тикĕс çулпа пыман чухне багаж пайĕнчи хатĕрсем тухса ӳкме пултараççĕ.

Тĕрĕслев итогĕсем тăрăх вĕрентӳ учрежденийĕсен директорĕсене представленисем панă. Çак вăхăта çитменлĕхсене пĕтернĕ.

## Налуксене тӳлесех пулать

Шел пулин те, район территорийĕнче налуксемпе тĕрлĕрен тӳлевсене вăхăтра парса татма васкаман предприятисемпе организацисем те çук мар-ха. Çавна май ку енĕпе район прокуратури тĕрĕслевсем тăтăшах ирттерет. Тĕрĕссипе вара налуксене вăхăтра тӳлессипе законодательство требованийĕсене шута хуманни патшалăхăн финанс ĕçĕ-хĕлĕшĕн те чăрмав пулса тăрать. Ку енĕпе район прокуратури малашне тĕрĕслевсем ирттерме, парăмçăсем енĕпе çирĕп мерăсем йышăнма палăртать.

**Е. ЕГОРОВ,**
**район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.**

Конкурс çĕнтерӳçи

## Эпĕ те тĕпчев ĕçне кӳлĕнтĕм





Эпĕ Нискасси шкулĕнче 4-мĕш класра вĕренетĕп. Нарăс уйăхĕн 29-мĕшĕнче Шупашкар хулинче 4-мĕш гимназире пуçламăш тата шкул çулне çитмен ачасем хушшинче тĕпчев ĕçĕсен конкурсĕ иртрĕ. Мана çак конкурсра ачасем йышлă пулни тĕлĕнтерчĕ. 7-11 çулхи ачасем валли те интересленмелли, тĕпчемелли нумай иккен. Эпĕ чăваш чĕлхипе литературин секцине «Манăн несĕлсем» ĕçе тăратрăм. Манăн несĕл йĕркин тымарне тĕпчес шухăш мĕнле çуралчĕ-ха?

Пирĕн класра «Эпир кам тымарĕнчен?» ятлă несĕл йывăçĕ пур. Манăн та класри пек хамăрăн çемье йывăçне тăвас шухăш çуралчĕ. «Миçе тăван хушшинче пурăнатăп-ши эпĕ паянхи кун? Пурне те ятран пĕлетĕп-ши? Пирĕн йăх мĕнле пуçланса кайнă? Çак ыйтусем хумхантарчĕç мана. Манăн анне çемьере 7-мĕш ача пулнă пулсан, атте вара 8-мĕш ача пулнă пулсан, тен эпĕ паянхи кун тăвансемпе чи пуянни пулăп.

Хамăн тĕпчев ĕçĕнче эпĕ Çемен кукаçи, асаттепе асанне, кукамайпа кукаçи çинчен те çырса кăтартрăм. Манăн асаттене **Никандр Васильевич Григорьев** тесе чĕннĕ. Пирĕн тăрăхра ăна палламан çын çук та пулĕ. **НИКАНДР** асатте вăрçă çулĕсенче Берлина çити çитнĕ, паттăр салтак кăкăр тулли наградăпа киле таврăннă. Мирлĕ вăхăтра та Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне илме пултарнă. 38 çул Суворов ячĕпе хисепленекен колхозра уй-хир бригадирĕнче ĕçленĕ. 1981 çулта Чăваш Республикин «Ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята тивĕçнĕ. Асаттепе асанне 8 ача пăхса ӳстернĕ. Манăн атте, **Анатолий,** çемьере чи кĕçĕнни пулнă. Асанне, **Зоя Семеновна Григорьева,** ĕçчен те сăпайлă, йăваш та ырă кăмăллă çын. Эпĕ асанне пирĕнпе пурăннишĕн савăнатăп, татах та нумай пурăнтăрччĕ.

Анне енчи тымарсене тĕпчесе Муркаш районĕнчи Тойкилтĕ ялне çитрĕм. Çакăнта пурăннă та ĕнтĕ манăн юратнă кукамайпа кукаçи. Кукаçи **Петр Саватеевич Саватеев**, кукамай вара **Агреппина Изосимовна Саватеева** ятлă пулнă. Вĕсем те 7 ача пăхса çитĕнтернĕ. Ĕçченлĕхĕпе, ырă кăмăлĕпе палăрса тăнă. Кукаçи Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕ пулнă, унăн наградисем халĕ те чи чыслă вырăнта упранаççĕ. Кукамайпа кукаçи килне час-часах кукка патне хăнана кайса çӳретпĕр.

Юлашкинчен хамăн пурнăç йывăççи çине 103 тăвана пĕр çĕре чăмăртаса пĕрлештертĕм. 2007 çулта пирĕн тата 7 пĕчĕк тăван çуралнă. «Мĕншĕн çак йывăç çине çĕнĕ туратсем тухсах тăраççĕ- ха?» - шухăшлатăп эпĕ. Йывăçĕ патмар пулнăран, тымарĕсем çирĕп тытнăран!

Асанне пулăшнипе çак несĕл йывăçĕн тымарне 4 сыпăк таран тĕпчесе пĕлесчĕ, малалла çитĕнекен туратсем çине тин çеç çуралнă тăвансене кĕртсех пырасчĕ.

Пĕчĕк тĕпчевçĕсен конкурсĕнче эпĕ çĕнтертĕм. Мана медаль тата диплом парса чысларĕç. Паллах, конкурсра çĕнтерни мана тата малалла тĕпчеме вăй-хал парать.

**Вадим ГРИГОРЬЕВ.**

«Суд реформи: çыннăн тата граждансен интересĕсене хӳтĕлесси»

## «Ачасем савăнăç çеç кӳччĕр»



***Кашни çынах хăйĕн ĕмĕрне чыслăн пурăнмалла пек. Шел пулин те, пĕрисем шутласах, теприсем шутламасăрах тĕрĕс çултан пăрăнаççĕ. Çапла вара суд алăкне уçмалла пулса тухать. Кун пирки район сучĕн председателĕ Э.Л. ТАРАСОВА акă мĕн калать:***

– Пĕр айăпсăр çын та йăнăшпа судпа ан айăплантăр, пĕр айăплă çын та тунă преступленишĕн айăпланмасăр ан юлтăр.

Гражданла ĕçсене пăхса тухнă чух вара граждансен Конституципе пăхса хăварнă прависемпе ирĕкĕсене хӳтĕлессине чи малти вырăна хураççĕ район судĕнче.

2006 çулхи сентябрь уйăхĕнче Раççей Федерацийĕн Правительстви «Раççейри суд системин аталанăвĕ: 2007-2011 çулсем» федераллă тĕллевлĕ программа йышăнчĕ. Правосуди пахалăхне, граждансемпе организацисен прависемпе саккунлă интересĕсене хӳтĕлессин пахалăхне ӳстересси – акă мĕнле тĕп тĕллев асăннă программăн. Кирек епле ĕçре те пĕр-пĕринчен вĕренни паха. Çавна май иртнĕ çулхи октябрьте Португалинче çак çĕршывпа Раççейри суд системинче ĕçлекенсем пĕр-пĕрин опычĕпе паллашрĕç. Чăваш Республикинчи 4 çынран тăракан делегацире республикăн Верховнăй сучĕн судйисемпе пĕрле пирĕн район сучĕн председателĕ Э.Л. Тарасова та пулчĕ.

Сăмаха малалла тăсиччен çакна каласа хăвармалла. Муркаш район сучĕн коллективĕ республикăра ырă ят çĕнсе илчĕ. Иртнĕ çулхи апрель уйăхĕнче унăн опычĕпе паллашас тĕллевпе республикăри судьясен семинар-канашлăвĕ иртрĕ. Ун хыççăн июльте Муркашсен ырă опычĕпе Чĕмпĕр облаçĕнчи, Тутарстанри тата Чăваш Республикинчи суд департаменчĕсен управленийĕн ертӳçисем, суд канашĕсен председателĕсем тата çак республикăсемпе облаçăн массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсем килсе кайрĕç. Иртнĕ çулхи декабрьте Удмурт Республикинчи Верховнăй суд председателĕн çумĕпе судйисем те Муркаш район судĕнче çĕннине, интереслине пайтах курчĕç. Ĕçри тивĕçсене мĕнле пурнăçланинчен çеç мар, район сучĕн коллективĕ общество ĕçне мĕнле хутшăннинчен те.

Сăмах май, Муркаш район сучĕ республикăра чи малтан район сучĕн историне çырма пуçларĕ: альбомсем хатĕрлерĕ, стенд йĕркелерĕ. Паян коллектив Республика кунне халалласа ирттерекен конкурса 4 номинаципе хутшăнма хатĕрленет. Суд коллективĕ спортпа та туслă. Юлашки 2 çул хушшинче асăннă коллектив ĕçченĕсем Чăваш Республикинчи суд департаменчĕ, суд канашĕ судьясемпе суд аппаратĕнче ĕçлекенсемпе ирттерекен ăмăртусенче малти вырăнсене йышăнаççĕ. Районти спорт мероприятийĕсене те хутшăнать суд коллективĕ. Эрнере икĕ кун ĕç хыççăнхи вăхăта район центрĕнчи çĕнĕ спортзалта ирттереççĕ район судĕнче ĕçлекенсем.

(Вĕçĕ 5-мĕш стр.).